ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ТӲЛЕВСĔР ПРАВО ПУЛĂШĂВĔ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 5 ТАТА 6 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи тӳлевсĕр право пулăшăвĕ çинчен" 2012 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 20 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2012, 3 №; 2013, 10 №; 2014, 5, 12 №-сем; 2016, 4, 6 №-сем; 2017, 2 №; "Республика" хаçат, 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 26-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 5 статьян 1-мĕш пайĕнче:

а) 10^2-мĕш пункта "тăлăх ачасен" сăмахсем умĕн "сусăр ачасен," сăмахсем хушса хурас;

ă) çакăн пек çырса 19–23-мĕш пунктсем хушса хурас:

"19) çар çыннисене Федерацин "Çар çыннисене укçа-тенкĕпе тивĕçтересси тата вĕсене уйрăм тӳлевсем уйăрса парасси çинчен" 2011 çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнчи 306-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн укçа-тенкĕпе тивĕçтересси тата вĕсене уйрăм тӳлевсем уйăрса парасси;

20) çак Саккунăн 6 статйин 8^{13}-мĕш тата 8^{14}-мĕш пункчĕсенче кăтартнă çынсене çăмăллăхсем, социаллă гарантисем тата компенсацисем уйăрса парасси;

21) çак Саккунăн 6 статйин 8^{15}-мĕш пунктĕнче кăтартнă çынсене çăмăллăхсем, социаллă гарантисем тата компенсацисем уйăрса парасси;

22) çак Саккунăн 6 статйин 8^{13}-мĕш тата 8^{14}-мĕш пункчĕсенче кăтартнă çынсен шутĕнчи гражданина (вĕсен çемйисен членĕсемсĕр пуçне) хыпарсăр çухалнă тесе йышăнасси;

23) çак Саккунăн 6 статйин 8^{13}-мĕш тата 8^{14}-мĕш пункчĕсенче кăтартнă çынсен шутĕнчи гражданина (вĕсен çемйисен членĕсемсĕр пуçне) вилнĕ тесе пĕлтересси.";

2) 6 статьян 8^{13}–8^{16}-мĕш пункчĕсене çакăн пек çырса хурас:

"8^{13}) Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсенче çар службинче тăракан (тăнă) гражданссем, Раççей Федерацийĕн наци гвардийĕн çарĕсенче, Федерацин "Оборона çинчен" 1996 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнчи 61-ФЗ №-лĕ саккунĕн 1 статйин 6-мĕш пунктĕнче кăтартнă çар йĕркеленĕвĕсемпе органĕсенче çар службинче (службăра) тăракан (тăнă) гражданссем, вĕсем Украина, Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин, Запорожье облаçĕн тата Херсон облаçĕн территорийĕсенче ятарлă çар операцине хутшăннă тата (е) вĕсем Раççей Федерацийĕн патшалăх чиккинчи тата Украина, Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин, Запорожье облаçĕпе Херсон облаçĕн территорийĕсенче ятарлă çар операцийĕ иртекен вырăнсемпе çумлăн вырнаçнă Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен чикĕ хĕрринчи территорийĕсенчи хĕç-пăшаллă провокацисем вăхăтĕнче Раççей Федерацийĕн территорине хĕç-пăшалпа тапăнса кĕнине сирсе ярас енĕпе задачăсем пурнăçланă пулсан, Раççей Федерацийĕн право сыхлавĕн органĕсен асăннă территорисенче тăракан (тăнă) служащийĕсем (ĕçченĕсем), çав территорисенче служба тивĕçĕсене тата ытти çавнашкал тивĕçсене пурнăçлакан (пурнăçланă) гражданссем, çавăн пекех асăннă гражданссен çемйисен членĕсем;

8^{14}) Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсене çар службине мобилизаци йĕркипе илнĕ гражданссем, Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама хăйсен ирĕкĕпе пулăшасси çинчен калакан контракт тунă гражданссем, вĕсем Украина, Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин, Запорожье облаçĕн тата Херсон облаçĕн территорийĕсенче ятарлă çар операцине хутшăннă тата (е) вĕсем Раççей Федерацийĕн патшалăх чиккинчи тата Украина, Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин, Запорожье облаçĕпе Херсон облаçĕн территорийĕсенче ятарлă çар операцийĕ иртекен вырăнсемпе çумлăн вырнаçнă Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен чикĕ хĕрринчи территорийĕсенчи хĕç-пăшаллă провокацисем вăхăтĕнче Раççей Федерацийĕн террито-

рине хĕç-пăшалпа тапăнса кĕнине сирсе ярас енĕпе задачăсем пурнăçланă пулсан, Раççей Федерацийĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама пулăшакан организацип контракт тунă (ытти право хутшăнăвĕсенче тăнă) гражданссем, вĕсем çав территорисенче ятарлă çар операцине хутшăннă пулсан, çавăн пекех асăннă гражданссен çемйисен членĕсем;

8[15]) Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен йышăнăвĕсемпе килĕшӳллĕн 2014 çулхи çу уйăхĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа Донецк Халăх Республикин Хĕçпăшаллă Вăйĕсен, Луганск Халăх Республикин Халăх милицийĕн, Донецк Халăх Республикин тата Луганск Халăх Республикин çар йĕркеленĕвĕсемпе органĕсен йышĕнче çар çапăçăвĕсене хутшăннă çынсем, çавăн пекех асăннă çынсен çемйисен членĕсем;

8[16]) çак статьян 8[13]-мĕш тата 8[14]-мĕш пункчĕсемпе пăхса хăварнă, Украина, Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин, Запорожье облаçĕн тата Херсон облаçĕн территорийĕсенче ятарлă çар операцине хутшăнса тата (е) вĕсем Раççей Федерацийĕн патшалăх чиккинчи тата Украина, Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин, Запорожье облаçĕпе Херсон облаçĕн территорийĕсенче ятарлă çар операцийĕ иртекен вырăнсемпе çумлăн вырнаçнă Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен чикĕ хĕрринчи территорийĕсенчи хĕç-пăшаллă провокацисем вăхăтĕнче Раççей Федерацийĕн территорине хĕç-пăшалпа тапăнса кĕнине сирсе ярас енĕпе задачăсем пурнăçланă чухне пуçĕсене хунă гражданссен çемйисен членĕсем;".

2 статья

1. Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи тӳлевсĕр право пулăшăвĕ çинчен" 2012 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 20 №-лĕ саккунĕн 5 статйин 1-мĕш пайĕн 19-мĕш, 20-мĕш, 22-мĕш тата 23-мĕш пункчĕсен, 6 статйин 8[13]-мĕш, 8[14]-мĕш тата 8[16]-мĕш пункчĕсен положенийĕсен вăйĕ 2022 çулхи нарăс уйăхĕн 24-мĕшĕнчен пуçланнă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О.Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕ
49 №